Выльăх-чĕрлĕх пăхакансен районти конкурсĕнчен

# Çĕннишĕн тăрăшмалла, малашлăхшăн ĕçлемелле



Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов конкурса хутшăнакансене ăнăçу сунать.



«Ăмăрту условийĕсем кашниншĕнех паллă, анчах кам çĕнтерĕ-ши?» – шутлаççĕ иртнĕ çулхи çĕнтерӳçĕсем – Суворов яч. хис. хуçалăхăн техник-осеменаторĕ Ф. Максимова тата «Оринино» хуçалăхăн ĕнесене 26-мĕш çул машинăпа сăвакан оператор Г. Ковалева.



Машинăпа ĕне сăвакан çамрăк операторсем хушшинчи ăмăртура çĕнтернĕ (иккĕмĕш вырăн – сулахайра) В. Максимова, С. Федорова, З. Иванова хисеп картлашки çинче.

Муркаш ен ял хуçалăх районĕ пулнăран пирĕн тăрăхра выльăх-чĕрлĕх аталантарасси тата унран продукци ытларах илесси – тĕп ĕçсен шутĕнче.

– Çĕннине тăтăш вĕренмеллине, ыранхи куна пăхса ĕçлемеллине, малашлăхшăн тăрăшмаллине пирĕнтен пурнăç ыйтать. Çакна эпир туятпăр. Паянхи уявра-ăмăртура та хамăр районăн, Чăваш Республикин тата Раççей Федерацийĕн экономикине малалла уттаракан, çак тĕллевпе вăй хуракан ĕçченсем пуханнă. Сире умри ăмăртусенче ăнăçу та телей сунатăп, – терĕ пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенчи машинăпа ĕне сăвакан операторсемпе ĕнесене искусствăлла майпа пĕтĕлентерекен техниксен конкурсне уçнă май район пуçлăхĕ Ю. А. Иванов.



Арçын доярсем хушшинче ырăпа палăрнă «Ударник» хуçалăхри Николай Иванович Александров уйрăм парнене тивĕçрĕ.

Юрий Александрович сăмахĕсене никам та хирĕçлемерĕ, хирĕçлеймĕ те. Юлашки çулсенче Раççей Федерацийĕн Президенчĕ палăртнă «Агропромышленноç комплексне аталантарасси» приоритетлă наци проекчĕ (паян вăл программа) ял хуçалăх предприятийĕсене, ялта пурăнакансене çĕнĕ аталану çулне уçса ĕçлеме вăй панине, хăйсем ку таранччен пурнăçланă ĕçсем çине вĕсене çĕнĕлле пăхма хистенине, кашнин умнех çĕнĕ тĕллевсем лартса çакна валли урăхла ĕç мелĕсем алла илме, производствăна çĕнĕ технологисем кĕртме хавхалантарнине пурсăмăр та курса тăратпăр. Мĕн тетĕр эсир? Пăр тапранчĕ, çанă тавăрса ĕçе кӳлĕннисен продуктивлăхĕ ӳсрĕ. Анчах та кун йĕркинче темĕнле проект-программа пулсан та, конкретлă ĕçлекен ăсталăхĕ малти вырăнта тăрать. Вăл çапла пулнă, пулĕ те. Çакна асра тытса тата обществăлла выльăх-чĕрлĕх патĕнче чунне парса ĕçлекенсен малтуртăмлăхне аталану çулĕ çинче пурнăçпа тан илсе пырас тĕллевпе район администрацийĕ çулленех пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче машинăпа ĕне сăвакан операторсен тата ĕнесене вăхăтра пĕтĕлентерессишĕн яваплă пулса тăракан техник-осеменаторсен конкурсне ирттерет. Кăçал та çак ырă пуçару кун йĕркинчен тухса ӳкмерĕ.

Çĕртме уйăхĕн 5-мĕшĕ. Игорь Васильевич Николаев ертсе пыракан Ильич ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕн Уйкас Янасалти сĕт ферми. Кунти хастар ĕçченсен коллективне пĕрремĕш çул мар ĕнтĕ Валентина Леонидовна Аврамова ертсе пырать. 191 пуç сумалли ĕнеллĕ ферма куллен тухăçлă сĕт парать. Апат пур, производство линийĕсем пĕр кăлтăксăр ĕçлеççĕ, ĕçлекенсем те хăйсен тивĕçне вăхăтра пурнăçланипе палăраççĕ. Çак звеносен килĕшĕвĕ – малтуртăмлă ĕç никĕсĕ. Производство кооперативĕ пĕтĕм тĕнчери экономика кризисĕнче те пуç усманнине шута илсен тата Ильич яч. хис. хуçалăхăн кăтартăвĕсене усă куракан 100 гектар çĕр пуçне пăхсан, кунта та Вaçкассисемпе Уйкас Янасалсем кайри ретре мар: январь – май уйăхĕсенче 268,3 центнер сĕт, 17,5 центнер ашкакай туса илме пултарнă. Сĕтпе пăхсан, вăл районти вăтам кăтартуран самай ӳсĕмлĕрех. Çакăнпа пĕрлех мăйракаллă шултра выльăхсен талăкри вăтам ӳтхушаслăхĕ те ытти нумай хуçалăхсемшĕн тĕслĕх вырăнне: 458 грамм. Çак хуçалăх базинче ĕнесене машинăпа сăвакан операторсен тата техник-осеменаторсен çулленхи ырă йăлана кĕнĕ районти конкурсне ирттернинче хăйне евĕр тĕллев те пур: инçе каймасăрах курăр, вĕренĕр!

Палăртнă вăхăта ăмăрту участникĕсем йышлă пухăнса çитрĕç. Малтанах вĕсем Ильич ячĕпе, Чкалов ячĕпе хисепленекен, «Ударник» хуçалăхсенчи ĕнесем çӳрекен çарансемпе, унта çӳрекен кĕтӳсемпе вырăнсене тухса паллашрĕç. «Ударник» хуçалăхра курăк çулма тухни пирĕн тăрăха та «симĕс ĕç çи» çитнине çирĕплетрĕ. Апла пулсан çитес хĕл кунĕсем валли выльăх апачĕ хатĕрлес тапхăр пуçланчĕ. Ăна ăнăçлă ирттерни – малашлăхăн çирĕп никĕсĕ. Хуçалăхсен улăх-çаранĕсенчен таврăнсан пухăннисем районти выльăх-чĕрлĕх отраслĕн пĕлтĕрхи тата иртнĕ хĕл кунĕсенчи ĕç-хĕлне тишкерчĕç, малта пыракансене чысларĕç.

Палăртмалла, район шайĕнче ирттернĕ çакнашкал ĕçлĕ тĕл пулăва кашни хуçалăхранах хутшăнма кăмăл тумарĕç, çапла вара вĕсем нумай çухатрĕç теес килет. Паллах, унти ĕçченсем конкурса килес теменнине ĕненес килмест, анчах мĕн каласа е каламасăр «çăлăнĕç-ши» вăл хуçалăх ертӳçисемпе зооветспециалисчĕсем? Ыйтăвĕ пур, анчах хуравĕ çук. Çакă çеç пурне те паллă: ку çулпа кайсан йывăрлăхсене çĕнме çук. Ăсталăх вара ăмăртура, кӳршĕсен ĕçне тишкернинче туптанать.

Ăмăртăва хутшăнакансем умĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ, ял хуçалăх пайĕн ертӳçи В.К. Ананьев сăмах калани асра юлчĕ:

– Ырă йăлана кĕнĕ çак лайăх конкурса кун йĕркинчен кăларманни эпир пурсăмăр та малалла пăхнине çирĕплетет. Пирĕн вара умри тĕллевсем пысăк. Паянхи конкурса хутшăнса пирĕн хамăрăн умри çĕнĕлĕхсене алла илме хатĕр пулнине кăтартмалла, – терĕ конкурса хутшăнакансене ăнăçусем сунса Владислав Кириллович.

Районти выльăх-чĕрлĕх отраслĕн аталанăвĕпе паллаштарса сăмах каланă чух район пуçлăхĕ Ю. Иванов фермăра ĕçлекенсем район экономикишĕн питĕ сăваплă ĕç тунине, çак тытăмра Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăх тĕреклĕхпе палăрса тăнине тĕслĕхсемпе уçса çирĕплетсе пачĕ, çĕннине алла илмесĕр малашлăх аталану ик телейлĕ пулнине палăртрĕ.

– Анчахран çăва тухрăмăр пулсан та, Ильич яч. хис. хуçалăхăн Уйкас Янасалти сĕт фермин çитес хĕле хатĕр сарайĕсене кĕрсен кунти тасалăх тыткăна илет. Унти хĕвел çутипе тулнă пӳлĕмсем, кунти ĕçченсем хăйсен ĕçĕ çине ответлăха туйса пăхни, вĕсем ĕçре тирпейлĕхе мала хуни, çаксем пĕрле ăнăçу никĕсĕ пулни курăнать, – терĕ ăмăртăва хутшăнакансене фермăри ĕçсемпе тĕплĕнрех паллашса кайма сĕнсе Юрий Александрович. Ăмăртăва килнĕ техник-осеменаторсемпе машинăпа ĕне сăвакан операторсем Уйкас Янасалти сĕт фермин ĕçĕпе-пурнăçĕпе тĕплĕн паллашнă хыççăн хăйсен ăсталăхĕсемпе пултарулăхĕсене ушкăна-ушкăна пайланса кăтартрĕç. Кашни номинацирех ăмăрту çивĕч пулчĕ. Уйрăммăн илсен, конкурса килнĕ дояркăсемпе доярсем малтан теори пĕлĕвне кăтартнă хыççăн жюри членĕсем умĕнче сĕт сумалли аппарата вăхăтра сӳтсе пуçтарассипе тата ĕне сăвассипе, техник-осеменаторсем хăйсен ĕç йĕркипе тата ĕнесене искусствăлла майпа пĕтĕлентерес культура пĕлĕвĕпе ăмăртрĕç.

– Конкурса ирттерме çуллен хутшăннăран тата тăтăшах жюри членĕ пулнăран ĕне сăвакансемпе техник-осеменаторсен пĕлĕвĕ ырă еннелле улшăнни курăнать. Тăтăшах çак конкурса хутшăнакансен малтуртăмлăхĕ яр уççăн палăрать ĕнтĕ, – терĕ конкурссем вĕçленсе пынă май районти выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станцин тĕп врачĕ Н. Яковлев. Специалист çапла хак пани – конкурсăн чи курăмлă енĕ. Чăнах та конкурса хутшăнакансем ăмăртăвăн нихăш енĕпе те çухалса кайманни вĕсем хăйсен ĕçĕнче чăн-чăн ăстасем пулнине çирĕплетрĕ.

– Тивĕçĕмĕрсене пĕлетпĕр тата юратса ĕçлетпĕр пулсан, мĕншĕн пирĕн çĕнтерӳçĕсен картлашки çине хăпармалла мар-ха? – ыйтуллăн хуравларĕ «Кăçал та çĕнтерӳçĕ пулма хатĕр-и?» тесе интересленсен «Оринино» ял хуçалăх производство кооперативĕн Патаккассинчи сĕт ферминче машинăпа ĕне сăвакан пулса 26 çул ĕçлекен Галина Пантелеймоновна Ковалева конкурса ăста хутшăннисем хисеп картлашки çине хăпарнине кăмăллă сăнанă май. Сăмах май,



Ĕне сăвакансен ĕçне хак паракан жюри членĕсем: Суворов яч. хис. хуçалăхăн тĕп специалисчĕ, пĕлтĕр «ЧР тава тивĕçлĕ зоотехникĕ» ят илнĕ Г. Васильева, «Оринино» хуçалăхăн тĕп зоотехникĕ Р. Пушкова, районти выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станцин выльăх тухтăрĕ А. Федорова.



Тĕп дояркăсем хушшинче Г. Ковалева, В. Макарова, С. Иванова ыттисемшĕн тĕслĕх пулчĕç, малти вырăнсене тухрĕç.



Хăйсен ĕçĕнче ăста та пултаруллă В. Леонтьева, Ф. Максимова, Л. Федорова техник-осеменаторсем.

Г. Ковалева кăçал та пĕлтĕрхи пекех тĕп дояркăсем хушшинче чи пултарулли пулчĕ.

Каçхи сăвăмпа вĕçленнĕ конкурс ытти çĕнтерӳçĕсене çапла пайларĕ. Çамрăксем хушшинче «Ударник» хуçалăхран килнĕ Валентина Александровна Максимована çитекенни пулмарĕ. Улттăмĕш çул фермăра машинăпа ĕне сăвакан çамрăк хăйне çирĕплетсе панă ушкăнри кашни ĕнерен тулăх сĕт сăвать. Мĕнех, ĕçлесен ӳсĕм айккалла тармасть. Ун хыççăнхи вырăнсенче Ильич яч. хис. хуçалăхри Светлана Федорова тата Е. Андреев яч. хис. хуçалăхри Зоя Иванова.

Тĕп дояркăсем хушшинче «Оринино» хуçалăх доярки Г.П. Ковалева хыççăн Суворов яч. хис хуçалăх ĕçченĕпе В.В. Макаровапа Ленин яч. хис. хуçалăхра вăй хуракан С. Иванова пулчĕç. Арçын доярсем хушшинче «Ударник» хуçалăхри Николай Иванович Александров уйрăм парнене тивĕçрĕ.

Техник-осеменаторсем хушшинчи хĕрӳ кĕрешӳре кăçал пĕлтĕрхи çĕнтерӳçĕрен Суворов яч. хис. хуçалăхри Ф. Максимоваран «Герой» ял хуçалăх производство кооперативĕн специалисчĕ В. Леонтьева иртрĕ, пĕрремĕш вырăн çĕнсе илчĕ. Ф. Максимова вара иккĕмĕш вырăнта, Ильич яч. хис. хуçалăхри Л. Федорова техник-осеменатор – виççĕмĕш.

Яра куна тăсăлнă конкурс ăнăçлă иртрĕ. Вăл районти выльăх пăхакансем хушшинче маçтăрсем, хăйсен ĕçне чунĕпе парăннисем сахал мар иккенне кăтартрĕ. Конкурса хутшăнакансене Уйкас Янасалти Культура çурчĕ çумĕнчи художество пултарулăх ушкăнĕ çепĕç юрăсемпе савăнтарчĕ, тивĕçлĕ кану йĕркелеме пулăшрĕ.

**Анатолий БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**